Ăслăлăх статйи

# Топонимсене шкулта вĕрентесси

**DOI** 10.31483/r-100579
**УДК** 81.373

**Егорова А.С.**
ЧР ХПВ Чăваш Енĕн Вĕренӳ министерствин «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ,
Шупашкар хули, Раççей Федерацийĕ.
ORCID: https://orcid.org/0000-0002-3603-171X, e-mail: annaerenar@mail.ru

***Аннотаци:*** Статьяра шкулта топонимсене вĕрентес ыйтăва хускатнă. Тема актуаллăхĕ топонимсене вĕрентни шкул ачисен культуроведени компетенцийĕсене аталантарас, вĕсене харкамлăх, пур предмета та вĕренме кирлĕ тата предмет результачĕсем патне çитерес ĕçре пысăк пулăшу панипе çыхăннă. Географи объекчĕсен ячĕсене ачасем яланах кăсăкланса вĕренеççĕ. Статьяра урокра тата урок тулашĕнче ачасен тавра курăмне, предметсен хушшинчи çыхăнăва анлăлатас ĕçри топоними материалĕн пĕлтерĕшне уçса панă.

*Тĕпчев ĕçĕнче* çак меслетсемпе усă курнă: асăннă темăпа çыхăннă наукăпа меслетĕх литературипе, вĕрентекенсен çак темăпа пухнă опычĕпе паллашни, пĕтĕмлетни, вĕрентӳпе воспитани ĕç-хĕлне сăнани.

*Тĕпчев ĕçне ирттернĕ* май вĕренӳпе воспитани тĕллевĕсене пурнăçлас ĕçре топонимсемпе усă курассин чи тухăçлă мелĕсене тупса палăртнă, топонимсене пухмалли анкета, асăннă темăпа ачасен наукăпа тĕпчев ĕç-хĕлне йĕркелемелли меслетлĕх сĕнĕвĕсене хатĕрленĕ. Хатĕр ĕçпе ытти вĕрентекенсем уроксенче е урок тулашĕнчи ĕçсенче усă курма пултараççĕ.

*Автор пĕтĕмлетнĕ тăрăх*, географи объекчĕсен ячĕсене вĕренни ачасен пулмалли результачĕсене, культуроведен компетенцине аталантарма, тăван ен историйĕпе культурине лайăххрах пĕлме, чĕлхе пĕлӳпе хутшăну хатĕрĕ кăна маррине, наци культурине палăртмалли форма пулнине те ăнланса илме пулăшать.

***Тĕп сăмахсем:*** топонимсем, топоним тĕсĕсем, чăваш чĕлхи меслетлĕхĕ, пулмалли результатсем, чăваш топонимĕсене пухмалли анкета, лексикăпа семантика тишкерĕвĕ, топонимсен пулăвĕн тишкерĕвĕ.

***Цитатăлама:*** Егорова А.С. Топонимсене шкулта вĕрентесси // Вĕренӳ аталанăвĕ. – 2021. – Т. 4, №4. – С. 61-64. DOI 10.31483/r-100579.

Научная статья

# Изучение топонимов в школе

**Егорова А.С.**
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики,
Чебоксары, Российская Федерация.
ORCID: https://orcid.org/0000-0002-3603-171X, e-mail: annaerenar@mail.ru

***Резюме:*** Статья посвящена вопросам изучения топонимов в школе. Актуальность темы определяется эффективностью использования топонимов для формирования у обучающихся культуроведческих компетенций, для достижения ими личностных, метапредметных и предметных результатов. Практика показывает, что названия географических объектов всегда вызывают большой интерес у обучающихся.

*Методы,* используемые в исследовании: анализ научно-методической литературы по данной теме; изучение и обобщение опыта педагогов, работающих по данной теме; наблюдение за учебно-воспитательным процессом.

*Результатом работы являются*: выявление наиболее эффективных приёмов использования топонимов на уроках чувашского языка и литературы для реализации образовательно-воспитательных задач, составление анкеты для сбора топонимов, разработка методических рекомендаций по организации научно-исследовательской деятельности обучающихся по данной теме. Практическая ценность данной работы определяется возможностью применения ее результатов педагогами на уроках и во внеурочное время.

*В заключении* автор приходит к выводу, что изучение названий географических объектов помогает достигать планируемых результатов, развивать культуроведческие компетенции, узнавать историю и культуру родного края, осознавать, что язык является не только средством познания и общения, но и формой выражения национальной культуры.

***Ключевые слова:*** топонимы, виды топонимов, методика преподавания чувашского языка, достижение планируемых результатов, анкета по сбору чувашских топонимов, лексико-семантический анализ топонимов, словообразовательный анализ топонимов.

***Для цитирования:*** Егорова А.С. Изучение топонимов в школе // Развитие образования. – 2021. – Т. 4, №4. – С. 61-64. DOI:10.31483/r-100579.

Research Article

# Learning Toponyms at School

**Anna S. Egorova**
BI of FVE "Chuvash Republican Institute of Education" of the Ministry of Education of Chuvashia,
Cheboksary, Russian Federatio.
ORCID: https://orcid.org/0000-0002-3603-171X, e-mail: annaerenar@mail.ru

***Abstract:*** The article is devoted to the issues of learning toponyms at school. The relevance of the topic is determined by the effectiveness of using toponyms to form students' cultural competencies, to achieve their personal, meta-subject and subject results. Practice shows that the names of geographical objects always arouse great interest among students.

*Methods* used in the study: analysis of scientific and methodological literature on this topic; study and generalization of the experience of teachers working on this topic; observation of the educational process.



CC BY

*The results of the work* are identification of the most effective methods of using toponyms in the lessons of the Chuvash language and literature for the implementation of educational and educational tasks, compilation of a questionnaire for collecting toponyms, development of methodological recommendations for the organization of research activities of students on this topic. The practical value of this work is determined by the possibility of applying its results by teachers in the classroom and outside of school hours.

The author comes to *the conclusion* that studying the names of geographical objects helps to achieve the planned results, develop cultural competence, learn the history and culture of the native land, realize that language is not only a means of cognition and communication, but also a form of expression of national culture.

***Keywords:*** toponyms, types of toponyms, methods of teaching the Chuvash language, achievement of planned results, questionnaire for collecting Chuvash toponyms, lexical and semantic analysis of toponyms, word-formation analysis of toponyms.

***For citation:*** Egorova A.S. (2021). Learning Toponyms at School. *Razvitie obrazovaniya = Development of education, 4*(4), 61-64. (In Chuv.) DOI 10.31483/r-100579.

**Кӳртӗм**

Географи объекчӗсен ячӗсене топонимсем (< гр. *topos* «вырӑн, тавралӑх», *onyma* «ят») теҫҫӗ. Топонимсене шкулта вӗрентни пысӑк пӗлтерӗшлӗ: ҫакӑ шкул ачисен культуроведени компетенцийӗсене аталантарать, вӗсене харкамлӑх, пур предмета та вӗренме кирлӗ тата предмет результачӗсем патне ҫитерме пулӑшать. 8–9-мӗш классен ФГОС ыйтнине тивӗҫтерекен «Чӑваш чӗлхи» вӗренӳ кӗнекисенче те [1; 2] топонимикӑпа ҫыхӑннӑ хӑнӑхтарусем сахал мар. Шел пулин те, пур вӗрентекен те ҫак ӗҫсене ирттерме хатӗр марри паллӑ пулчӗ, ҫавӑнпа статья паянхи куншӑн актуаллӑ тесе шутлатпӑр.

**Тӗпчев ӗҫӗнче усӑ курнӑ меслетсем**

Асӑннӑ темӑпа ҫыхӑннӑ наукӑпа меслетӗх литературине тишкертӗмӗр, вӗрентекенсен топонимикӑпа ҫыхӑнтарса ирттернӗ урокӗсенче пултӑмӑр, наукӑпа практика конференцийӗсенче ачасен тӗпчев ӗҫӗсене итлерӗмӗр, шкулти вӗренӳпе воспитани ӗҫ-хӗлне сӑнарӑмӑр, вӗрентекенсен ку таранччен пухнӑ опычӗпе паллашрӑмӑр.

**Тӗпчев ӗҫӗн результачӗсене пӑхса тухни**

Чи малтанах топонимикӑпа ҫырнӑ наукӑпа меслетӗх литературине пӑхса тухрӑмӑр. Наука тӗлӗшӗнчен топонимсене чылай тӗпчевҫӗ тишкернӗ, сӑмахран, М.Р. Федотов [12], Н.И. Егоров [3], Ю.Н. Исаев [10], А.С. Егорова [7]. Топонимсене шкулта вӗрентес меслетлӗхе уҫса панӑ ӗҫсем вара ҫукпа пӗрех. Топонимикӑпа ҫыхӑнтарса ирттернӗ уроксенче пулнӑ хыҫҫӑн вӗрентекенсем географи объекчӗсен ячӗсене вӗрентмелли меслетлӗхе пӗлсех кайманнине сисрӗмӗр. Наукӑпа практика конференцийӗсенче ачасен тӗпчев ӗҫӗсене итленӗ май вӗсем топоним тӗсӗсене пӗлменни, халӑх тата наука этимологийӗсене пӑтраштарни, топонимсене тӗрлӗ енчен тишкерес вырӑнне вӗсене каласа тухнипе кӑна ҫырлахни курӑнчӗ. Паллах, вӗрентекенсен хушшинче ку енӗпе маттур ӗҫлекенсем пурри питӗ савӑнтарать.

Ҫакӑн пек ӗҫсем туса ирттернӗ хыҫҫӑн ачасене чи малтанах топонимсене мӗнле географи объекчӗсене ят панине кура уйӑрма вӗрентмелле тесе шутлатпӑр.

Ҫын пурӑнакан вырӑн (хула, ял, сала, поселок, хутор, станица, аул т. ыт. те) ячӗсене ойконимсем теҫҫӗ. Ойконимсене хӑйсене икӗ ушкӑна уйӑрма пулать: астионимсем (хула ячӗсем) тата комонимсем (ял ячӗсем).

Шыв-шурпа ҫыхӑннӑ объектсен (тинӗс, юхан шыв, кӳлӗ, пӗве, шурлӑх, ҫӑл, ҫӑлкуҫ) ячӗсене гидронимсем теҫҫӗ.

Гидронимсен тӗсӗсем:

1) океанонимсем – океан ячӗсем: *Лӑпкӑ океан, Инди океанӗ* т. ыт те;

2) пелагонимсем – тинӗс ячӗсем: *Хура тинӗс, Шурӑ тинӗс* т. ыт. те;

3) потамонимсем – юхан шыв ячӗсем: *Атӑл, Сӑр шывӗ* т. ыт. те;

4) лимнонимсем – кӳлӗ, пӗве ячӗсем: *Тени кӳлли, Ял пӗви* т. ыт. те;

5) гелонимсем – шурлӑх ячӗсем: *Мӑклӑ шур, Малти шурлӑх* т. ыт. те.

Ҫӗр пичӗн рельефӗн (айлӑмсен, тусемпе-сӑртсен) ячӗсене оронимсем теҫҫӗ: *Шкул тӑвайкки, Тӗмеске ҫучӗ* т. ыт. те.

Одонимсем тесе ҫул-йӗр ячӗсене (*Вӑрӑ ҫулӗ, Шупашкар ҫулӗ*), дримонимсем тесе вӑрман ячӗсене (*Малти шӗшкӗ, Хыр кати*), агронимсем тесе уй-хир ячӗсене (*Малти хир, Кӳпеш уйӗ*) калаҫҫӗ.

Топонимсемпе произведени тишкернӗ, тӗрлӗ хӑнӑхтару пурнӑҫланӑ чухне, пуплеве аталантармалли уроксенче усӑ курма юрать. Ҫавӑн пекех ачасене пайӑр ятсене тӗпчеттерсе тӗрлӗ конференципе конкурса хутшӑнтарма пулать.

Шкул ачисемшӗн хӑйсем пурӑнакан вырӑнти геграфи объекчӗсен ячӗсем кӑна мар, хӑйсен аслашшӗ-кукашшӗ пурӑнакан вырӑнти ятсем те интереслӗ пулма пултараҫҫӗ. Аслӑрах классенче вӗренекенсене ҫакӑн пек анкета парса топонимсем пуҫтарас ӗҫе явӑҫтармалла:

1. Ял ячӗ. Кивӗ ят пулсан, ӑна та палӑртӑр. Ял мӗнле тата хӑҫан пуҫланса кайни ҫинчен халӑхра ҫӳрекен халапсене ҫырӑр.

2. Ялти урам, тӑкӑрлӑк ячӗсем.

3. Шыв-шур ячӗсем: (юхан шыв ячӗсем; шыв юпписен ячӗсем; кӳлӗсемпе пӗвесен ячӗсем; шурлӑхсемпе йӗпе тӑракан вырӑнсен ячӗсем; ҫӑлсемпе ҫӑлкуҫсен ячӗсем; авӑр тата кӗрекаҫ ячӗсем; шыв сикки ячӗсем.

4. Варсемпе ҫырмасен, сӑрт-ту, ҫут ячӗсем.

5. Вӑрман, ӗшне, уҫланкӑ ячӗсем.

6. Ҫулсемпе сукмак ячӗсем.

7. Пӗччен ӳсекен йывӑҫсен, уйрӑм ларан хуралтӑсемпе арман ячӗсем.

Мӗншӗн ҫапла каланине ҫырӑр. Ҫак ятсене ял картти ҫинче кӑтармалла. Ял администрацийӗсемпе ял хуҫалӑх предприятийӗсен правленийӗсенче упранакан е Интернетран кӑларса илнӗ карттӑсемпе усӑ курма юрать. Географи объекчӗсен ячӗсене камран ҫырса илнине палӑртӑр (хушамачӗ, ячӗ, ашшӗ ячӗ; хӑҫан тата ӑҫта ҫуралнӑ; халӗ ӑҫта пурӑнать, кам пулса ӗҫлет).


CC BY

Тĕпчев ĕçĕ çырнă чухне унăн актуаллăхне, тĕллевĕсемпе задачисене тата ыт. те тĕрĕс палăртма пĕлмелле. Тема актуаллăхне палăртнă чухне чи малтан, пирĕн шутпа, топонимсем вăхăт иртнĕçемĕн манăçа тухса пынине шута илмелле. Хăш-пĕр гидроним, сăмахран, уйрăм тĕпчев ĕçĕсенче сыхланса юлнă пулин те юхан шывĕсем вара типе-типе ларнă. Çавăнпа та географи объекчĕсен ячĕсене май килнĕ таран васкарах хут çине çырса юлмалла. Тĕпчев ĕçĕн тĕллевĕ пĕр-пĕр ялти (ял тăрăхĕнчи, районти) топонимсене тĕрлĕ енчен тишкересси пулма пултарать. Тĕллеве пурнăçлас тесе çакăн пек задачăсем лартма пулать:

1) ялти (ял тăрăхĕнчи, районти) топонимсене май килнĕ таран ытларах пухасси;

2) топонимсен картотекине йĕркелесси;

3) топонимсене тĕрлĕ (лексикăпа семантика, тытăмĕпе пулăвĕ) енчен тишкересси;

4) наука ĕçĕсемпе паллашса топонимсене хронологи сийĕсем çине уйăрса тухса тишкересси;

5) топонимсене карта çинче палăртасси т. ыт. те.

Ĕçĕн тĕллевне тата задачисене кура танлаштару, статистика, картографи мелĕсемпе ытларах усă курма тăрăшмалла.

Çакан пек ĕçсен практика пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине те каласа хăвармалла, мĕншĕн тесен пухнă материал малашне чăваш топонимийĕн тулли словарьне е атласне тунă чухне усăллă пулма пултарать.

Географи объекчĕсен ячĕсене тупса палăртас тĕллевпе май килнĕ таран ытларах материал вырăнтах тупма тăрăшмалла: ватă çынсемпе тĕл пулса калаçмалла, шкулсемпе музейсенчи, архивсенчи материалпа усă курмалла.

Кашни ята уйрăм карточка çине çыра-çыра пымалла, вĕсем пирки халăхра çӳрекен халапсемпе легендăсене пухмалла, май килнĕ таран несĕлне çутатма тăрăшмалла. Пысăкрах объектсене карта çинче палăртмалла. Çакăн пек туллин çырса илсе карта туни топонимсене комплекслă тĕпчеме май парать.

Топонимсене лексикăпа семантика енчен тишкерни географи объектне ят парас принципсене, вырăнти çут çанталăк географи уйрăмлăхĕсене, халăх историйĕпе йăли-йĕркине пĕлме пулăшать. Тĕрлĕ вăхăтра тата тĕрлĕ чĕлхе материалĕнчен йĕркеленнĕ пирки гидронимсен пĕлтерĕшне уçса парас тесен чĕлхе тата халăх историне аван пĕлмелле, вырăнти географи уйрăмлăхĕсене шута илмелле [4, с. 30]. Топонимсене пĕлтерĕш енчен тишкернине Ю.Н. Исаев [8; 9] ĕçĕсенче те асăрхама пулать.

Чăваш чĕлхинче икĕ сăмахран тăракан топонимсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ятсене пулăвĕпе тытăмĕ тĕлĕшĕнчен тишкерни топонимсен моделĕсене тупса палăртма пулăшать [6, с. 196–198].

Топонимсене хронологи сийĕсем çине уйăрса тишкерессi шкул ачисемшĕн йывăртарах пулма пултарать, çапах та вĕсем *-нар (-нер), -вăш (-вĕш), -лей* топоформантлă гидронимсемпе ойконимсене ыттисенчен уйăрса илме пултармалла. Финн-угр сийне кĕрекен топонимсем çинчен Ю.Н. Исаев [11], А.С. Егорова [5] ĕçĕсене вуласа пĕлме пулать.

**Пĕтĕмлетӳ**

Çапла вара, географи объекчĕсен ячĕсене вĕренни ачасен пулмалли результачĕсене, культуроведен компетенцине аталантарма, тăван ен историйĕпе культурине лайăхрах пĕлме, чĕлхе пĕлӳпе хутшăну хатĕрĕ кăна маррине, наци культурине палăртмалли форма пулнине те ăнланса илме пулăшать.


***Список литературы***

1. Виноградов Ю.М. Чăваш чĕлхи: 8 класс валли / Ю.М. Виноградов, А.С. Егорова. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издви, 2018. – 223 с.

2. Виноградов Ю.М. Чăваш чĕлхи: 9 класс валли / Ю.М. Виноградов, А.С. Егорова. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издви, 2020. – 224 с.

3. Егоров Н.И. Историко-этимологическая верификация генезиса и хронологическая стратификация топонимикона Чувашского Поволжья (( Ономастика и языки Урало-Поволжья: Материалы региональной конференции. – Чебоксары: ЧГИГН, 2002. – С. 19–24.

4. Егорова А.С. Лексико-семантические группы чувашских гидронимов // Развитие образования. – 2021. – Т. 4, № 1. – С. 29-34. doi:10.31483/r-98039.

5. Егорова А.С. Марийский пласт чувашской гидронимии / А.С. Егорова // Чуваши и марийцы – соседи по «общему дому»: материалы Межрегиональной научно-практической конференции (Большой Сундырь, Кулаково, 17 мая 2019 г.) / сост. и отв. ред. Г.А. Николаев; ЧГИГН, МарНИИЯЛИ. – Чебоксары: ЧГИГН, 2019. – С. 235 -240.

6. Егорова А.С. Словообразовательные модели чувашских гидронимов / А.С. Егорова // Ономастика Поволжья: материалы XVII Международной научной конференции. Составитель и редактор В.Л. Васильев. – Великий Новгород: ООО «ТПК «Печатный двор», 2019. – С. 195–199.

7. Егорова А.С. Чувашская гидронимия / А.С. Егорова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2010. – 198 с.

8. Исаев Ю.Н. К вопросу о происхождении некоторых топонимов г. Чебоксары / Ю.Н. Исаев, Л.Ю. Исаев // Ашмаринские чтения: сборник материалов IX Международной нучно-практической конференции. – Чебоксары Изд-во Чуваш. ун-та, 2014. – С. 52–61.

9. Исаев Ю.Н. Из истории села Норваш-Шигали Батыревского района Чувашской Республики / Ю.Н. Исаев // В.Л. Кузьмин и вопросы археографии, историографии и истории Чувашии: материалы региональной нучно-практической конференции / сост. и отв. ред. Ю.В. Гусаров. – Чебоксары: ЧГИГН, 2014. – С. 9–26.

10. Исаев Ю.Н. О происхождении названий некоторых мест юга Чувашии (на примере фольклорных и литературных источников) / Ю.Н. Исаев // Актуальные проблемы диалектологии языка народов России: материалы XV Всероссийской научной конференции, проводимой в рамках IV Всемирного курултая башкир и посвященной юбилею доктора филологических наук, профессора Ф.Г. Хисамитдиновой. – Уфа, 2015. – С. 106–110.



CC BY

11. Исаев Ю.Н. Финно-угорский субстрат в топонимии южных районов Чувашской Республики / Ю.Н. Исаев // Ономастика Поволжья: материалы XVII Международной нучной конференции. Составитель и редактор В.Л. Васильев. - Великий Новгород: ООО «ТПК «Печатный двор», 2019. – С. 216–219.

12. Федотов М.Р. Заметки о финно-угорских элементах в некоторых географических названиях Чувашии / М.Р. Федотов // Советское финно-угроведение. – 1970. – №4. – С. 127–135.

***References***

1. Vinogradov, Iu. M., & Egorova, A. S. (2018). Chavash chelkhi: 8 klass valli., 223. Shupashkar: Chavash keneke izd-vi.
2. Vinogradov, Iu. M., & Egorova, A. S. (2020). Chavash chelkhi: 9 klass valli., 224. Shupashkar: Chavash keneke izd-vi.
3. Egorov, N. I. (2002). Istoriko-etimologicheskaia verifikatsiia genezisa i khronologicheskaia stratifikatsiia toponimikona Chuvashskogo Povolzh'ia Onomastika i iazyki Uralo-Povolzh'ia., 19-24. Cheboksary: ChGIGN.
4. Egorova A.S. (2021). Lexico-Semantic Groups of Chuvash Hydronyms. Development of education, 4(1), 29-34. (in Chuv.). doi:10.31483/r-98039.
5. Egorova, A. S. (2019). Mariiskii plast chuvashskoi gidronimii. Chuvashi i mariitsy, prakticheskoi konferentsii (Bol'shoi Sundyr', 235-240. Kulakovo, 17; Nikolaev; Cheboksary: ChGIGN.
6. Egorova, A. S. (2019). Slovoobrazovatel'nye modeli chuvashskikh gidronimov. Onomastika Povolzh'ia, 195-199. Velikii Novgorod: OOO "TPK "Pechatnyi dvor".
7. Egorova, A. S. (2010). Chuvashskaia gidronimiia., 198. Cheboksary: Izd-vo Chuvash. un-ta.
8. Isaev, Iu. N., & Isaev, L. Iu. (2014). K voprosu o proiskhozhdenii nekotorykh toponimov g. Cheboksary. Ashmarinskie chteniia, Cheboksary Izd, , 52-61.
9. Isaev, Iu. N. (2014). Iz istorii sela Norvash-Shigali Batyrevskogo raiona Chuvashskoi Respubliki. V.L. Kuz'min i voprosy arkheografii, istoriografii i istorii Chuvashii, 9-26. Cheboksary: ChGIGN.
10. Isaev, Iu. N. (2015). O proiskhozhdenii nazvanii nekotorykh mest iuga Chuvashii (na primere fol'klornykh i literaturnykh istochnikov). Aktual'nye problemy dialektologii iazyka narodov Rossii: materialy XV Vserossiiskoi nauchnoi konferentsii, provodimoi v ramkakh IV Vsemirnogo kurultaia bashkir i posviashchennoi iubileiu doktora filologicheskikh nauk, professora F.G. Khisamitdinovoi, 106-110. Ufa.
11. Isaev, Iu. N. (2019). Finno-ugorskii substrat v toponimii iuzhnykh raionov Chuvashskoi Respubliki. Onomastika Povolzh'ia, 216-219. Novgorod: OOO "TPK "Pechatnyi dvor".
12. Fedotov, M. R. (1970). Zametki o finno-ugorskikh elementakh v nekotorykh geograficheskikh nazvaniiakh Chuvashii. Sovetskoe finno-ugrovedenie, 4, 127-135.

***Автор ҫинчен пĕлтерни***

**Егорова Анна Семеновна** – филол. ăслăлăхĕн к-чĕ, доцент, ЧР ХПВ Чăваш Енĕн Вĕренӳ министерствин «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, Шупашкар хули, Раҫҫей Федерацийĕ.

***Информация об авторе***

**Егорова Анна Семеновна** – канд. филол. наук, доцент, БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии, Чебоксары, Российская Федерация.

***Information about the author***

**Anna S. Egorova** – candidate of philological sciences, associate professor of BI of FVE “Chuvash Republican Institute of Education” of the Ministry of Education of Chuvashia, Cheboksary, Russian Federation.

**Поступила в редакцию / Received / Редакцие ҫитнĕ** 20.11.2021
**Принята к публикации / Accepted / Пичетлеме йышăннă** 16.12.2021
**Опубликована / Published / Пичетленсе тухнă** 22.12.2021


CC BY